К 81.411.2
А86
31260-чув



# Чӑваш
# БУКВАРӖ


Аа Ӑӑ Бб Вв
Ёё Жж Зз
Мм Нн Оо Пп
Уу Ӳӳ Фф
Щщ ъ Ыы ь

КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР



ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К
К 81.411
А 86

Т. В. АРТЕМЬЕВА, М. К. ВОЛКОВ, Л. П. СЕРГЕЕВ

# Чăваш БУКВАРĔ

Чăваш АССР Çутĕç министерстви
шкулсенче усă курма йышăннă

Хушса çĕнетнĕ
5-мĕш кăларăм

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1988

ББК 83.3 Чув я 72
Ч 12

Обязат. экз.

ПРОВЕРЕНО 07

31260-чув

Республиканской
БИБЛ ЕКА
им Горького

А $\frac{4306020200—117}{М\ 136(03)—88}$ 91—88

ISBN 5-7670-0083-2

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1988 ç.







































































































































































КОНДИТЕРСКИЕ ИЗДЕЛИЯ
КОНФЕТЫ















# САСПАЛЛИСЕМПЕ ПАЛЛАШАТПĂР.





Аа
Аа
Аа
Аа



а

# Аа



а





Аа
Уу
А-у-у!..
У-а!



у́



у



# Уу



у́



у



ă á

Aa

Уy

Ăă



ă a

# Ăă





ă



ă á

ан на  ун ну  ăн нă



□ а □ а́ н

а | на  у | нăн  у | на

Ан | на  ăн | нă  у | на | нă

# Нн







— Анна, ан!

Анна аннă.



л а □ а́

ал ла ăл лă ул лу

а | ла а | лă у | ла

ал | ла ал | лă ан ула

# Лл



□ ă □ а □ а́ л



Ула□ уланă.

— Ула□ , ан ула!

 ăна ________ .

ам ма ăм мă ум му



лум ма|на у|лăм

ман ма|ла ă|ман

м ă л а □ у́ □

# Мм





м у л □ á □

Ула□ăн 3  .

Ула□ аманнă.

Анна ăна ____ .



□ у́ л ă

ат та ут ту ăт тă

| | | |
|---|---|---|
| тăн | ту \| лă | ут |
| тун | ту \| тă | у \| тăм |
| тат | тă \| лă | ут \| лан |

# Т т





т ă □ н á

Анна □ăлан утланнă.
— Антун, ут утлан!
Антун ут утланнă.
— Утăм, малалла ут!

**та тан  ту тул  тă тăм**



| | | |
|---|---|---|
| тăм | Ан \| на | тум |
| тă \| ма | у \| нăн | тум \| ла |
| тă \| ман | ун \| тан | тум \| лан |

а́ □ ă



Анна тăнă.
— Анна, тумлан!
Анна тумланнă.

Унтан  тумланма ____ .

т у □ ă  у □ ăм  т ○ н



п у́ л ă

ап па  уп пу  ăп пă

| | | |
|---|---|---|
| пăт | туп | ту \| та |
| пă \| та | ту \| пă | ту \| тă |
| пă \| тă | ту \| па | туп \| нă |

# Пп





п у _ á



п у́ _ т ă

— Аппа, пăтă-ă-ă!
Анна Антуна пăтă панă.
Антун пăтта тутаннă.
Пăтă тутлă пулнă.
Антун лăпланнă.

ап тап уп туп ăп тăп

па пат пу пут пă пăт

Пă | ла пу | лă

пă | лан ă | ман

па | лан тă | ман



п ă □ а □ ÿ т









Атăл анлă.

Унта пулă нума□.

Антун пулла аннă.

Пулă ăман ___ .

аш ша ăш шă уш шу



шапá

ă | шă
ă | шăн
ă | шăн | нă

пу | лă
пу | лăш
пу | лă | шу

# Ш ш



шăлáн



Аллăпа Ануш шăлан татнă.

Анушăн  тулнă.

Аллăн  тулман.

— Ануш, мана пулăш!

ша шан шу шут шă шăп



á □ ă ш

ă | шă    та | шă
ă | шăн    ҫаш | ла
ă | ша | ла    таш | ла | нă









Ануш аппа ___ □аланă.
Антун ташланă.
Анна ташлама □ăтаннă.
— Анна, ташла, ан □ăтан!
Анна та ташлама тăнă.



р а □

ар ра    ур ру    ăр рă

| | | |
|---|---|---|
| лар | у \| ра | ар \| лан |
| пар | пу \| ра | ар \| ман |
| тар | у \| рам | Ра \| ман |

# Рр



Урамра ăшă.

— Раман, урама ту□!

Шурăпа Раман лашалла ___.

Раман лаша пулнă.

ар мар ур пур ăр тăр



| | | |
|---|---|---|
| пăр | у \| ра | шу \| рă |
| пă \| ра | ур \| па | шу \| рат |
| пу \| ра | у \| ра \| па | ту \| рат |

ш ă п ă □



Антун арман тунă.
Раманăн урапа пур.
— Антун, мана арман пар!
Антун Рамана арман панă.
Раман ăна урапа панă.

ар □ ан у □ а пă □ а



(ы́) □ (ă) □

ыт ты ыш шы ыр ры

| | | |
|---|---|---|
| ы \| ră | ты \| ră | ы \| ран |
| ы \| раш | шы \| ра | пы \| рам |
| ыл \| тăн | ы \| там | шыр \| лан |

# Ыы



## УТАРТА.

— Антун, ыран ман пата утара пыр.
Антун утара пынă.
Унта □ăл ____ пулăшнă.
А□лашш○ ăна пыл панă.

**ыр пыр ыл пыл ыт тыт**

| | | |
|---|---|---|
| ты \| мар | ыт \| ла | ы \| рă |
| тат \| ма | ăн \| нă | ты \| рă |
| тыт \| ма | пул \| нă | ыл \| тăн |
| туп \| ма | шăн \| нă | тул \| нă |



ы р á ш



## ЫРАШ.

Анна аппа тырă □ ырнă.
Унăн ______ ăннă.
Шурăпа Раман тырă турттарнă.
Шурăпа Раманăн та ______ ăннă.
Ыраш ытла ăн □ а пулнă.



в ă л т á

ав ва ув ву ăв вă ыв вы

| | | |
|---|---|---|
| лав | ы \| вăт | вы \| рăн |
| тав | ы \| вăл | вă \| рăм |
| шав | тă \| вăл | вăр \| ман |

# Вв





л а в

## ШЫВРА.

Шыв ăшă та тăрă.
Шывра ытла та аван.
Павлушпа Раман шывра.
— Павлуш, ан шăмпăлтат!

## ва вар  ву вут  вă вăт



| | | |
|---|---|---|
| шав | вырт | ву \| ла |
| шав \| лă | вы \| рам | ву \| лам |
| шыв \| лă | вы \| рăн | ву \| лăп |

в а □ á □



## АН ШАВЛА!

Ануш аппа ывăннă.
Вăл канма выртнă.
Павăлпа Анна шăппăн вуланă.
— Мăрмăр, ан шавла!



х у р

ах ха ух ху ăх хă ых хы

| | | |
|---|---|---|
| ут | хур | хă \| на |
| хут | хыр | хă \| мăл |
| хурт | хул | хăм \| ла |
| у \| тă | ху \| ла | хă \| мăр |

# Х х



## ВĂРМАНТА.

Хурăнлăхра хурăн  шырарăмăр.
Хырлăхра шурă  татрăмăр.
Хутăш вăрманта □ ăрă □ тупрăмăр.
Хамăр  хăвăртах тултартăмăр.
Унтан ăмăртмалла  татрăмăр.

## ха хам ху хут хы хыв

| | | |
|---|---|---|
| хум | у \| хă | ху \| ра |
| тум | у \| лăх | ху \| ран |
| тум \| ла | ху \| ла | ху \| рăн |
| тум \| хах | ху \| лă | ху \| ра \| ма |



х á □ ă



ула
хура
шурă







### УЛĂХРА.

Павăл улăха аннă.
Вăл хур пăхнă.
Анна ăна пулăшма пынă.
Вăл _____ хулăпа хăваланă.
— Анна, хуртан ан хăра!

_____ хур _____ хурăн _____ хуран



ш ă ш ◯

ин ил ир им иш ит
ни ли ри ми ши ти

| | | |
|---|---|---|
| ир | тир | ты \| ră |
| вир | пит | Ти \| мур |
| мир | Ти \| муш | пан \| ул \| ми |

# Ии



в ◯ р





п а □ у л м ◯

## ТУТЛĂ ПАНУЛМИ.

Ануш аппа панулми татнă.
Тимур ăна пулăшнă.
Павлуш арман авăртнă.
— Павлуш, панулми тыт!
Панулми тутлă-и?

пы пи хы хи

пыр пир хыр хир

тă | ри тум

пă | ши тум | хах

шă | ши тум | тир



п ă ш



## МАТТУР, ТИМУШ!

Анна  пăхнă.

— Аппа, пăрăва хамах шăварам-и?

Тимуш пăрăва ăшă шывпа шăварнă.

Унтан вăл ăна утă панă.

— Маттур, Тимуш,— мухтанă Анна.



у п ă т

та па ма на ла ра

те пе ме не ле ре

а | тă Ан | на шав | ла

ат | те ан | не шев | ле

ат | тем ан | нем хит | ре

# е [э]



в и т р



## ПАРНЕ.

— Марине маттур.

Вăл хитре  тунă.

Ăна  парам.

— Атте, пире те пар!

пир тем мел

э | пир э | тем э | мел

э | реш эр | не

Эр | хип Энт | ри

Эн | тип Эл | пи



мел

---



# Ээ



решмéн

## ТАВАХ, АППА!

Элпи хуларан таврăннă.
Амăшне вăл тутăр панă.
Энтип валли унăн вăлта пур.
— Тавах, аппа! — тет Энтип.



○ н é

лă мă  нă рă  пă тă
лĕ мĕ  нĕ рĕ  пĕ тĕ

| | | |
|---|---|---|
| вар | ва \| тă | пăл \| тăр |
| вăр | вĕ \| тĕ | пĕл \| тĕр |
| вĕр | вĕл \| ле | пĕ \| ле \| тĕр |

# Ĕ ĕ



## ПУЛĂРА.

Хĕвел тухман. Таврара шăп.
Хĕветĕрпе Павлуш пулăра.
Хĕветĕр  тытнă.
Павлушăн вăлтине  ле ☐ нĕ.
Пулăра ларма мĕн тери аван!

? Тулĕ — тулă, ăшĕ — пулă. 

пăр вăр тăм шăл
пĕр вĕр тĕм шĕл

ĕм тă | ră вĕ | ри
ĕ | мĕт тĕ | рĕ вĕ | рен
ĕ | мĕт | лен тĕт | ре вă | рăм



т é р ĕ



ĔШНЕ.

Марине амăшĕ тĕрĕ тĕрлет.
Тĕрри питĕ хитре.
Ĕшне тулли хĕрлĕ  .
Тавралла шурă хурăн□ем.
Унтах шĕшкĕ тĕмĕ□ем.
— Анне, лĕпĕш тĕрлем-и?



л ◯ п ◯ ш



□ л о н

ас эс ăс ыс ис ус
са се ĕс сы си су

| | | |
|---|---|---|
| сă \| вă | сă \| мах | у \| сă |
| Сĕ \| ве | си \| мĕс | пу \| сă |
| сы \| вă | сĕ \| лĕ | су \| ха |

# Сс



## СУХАРА.

Славăн ашшĕ сухара.
Вăл ыраш пуссине сухала□.
Ывăлĕ те ашшĕпе пĕрлех.
— Атте, эпĕ те сухаласа пăхам!
— Апла пулсан, ман вырăна лар!

са сӑ сӗ су сы
сан сӑр сӗр сул сып

сы | вӑ ӑс | та
си | вӗ хи | сеп | лӗ
си | вӗт | рӗ хи | сеп | лет



□ е х е́ т





Ӑвӑс ____.



Сурӑх ____.

## ТУССЕМ.

Сантӑрпа Тимуш пӗр тантӑш.
Сантӑр улттӑра.
Тимуш та улттӑра.
Вӗсем питӗ туслӑ.
Туссем ра□ета тӑвасшӑн.
— Сантӑр, эсӗ савала. Эпӗ сӑрлам.




ак эк ăк ĕк ык ик
ка ке кă кĕ кы ки

| | | |
|---|---|---|
| сак | кас \| ка | вă \| кăр |
| сик | кĕс \| ке | мĕ \| кĕр |
| тĕк | кĕс \| мен | тĕ \| кĕр |

# Кк



## АВТАН.

Пирĕн пысăк автан пур. Вăл мă□ не тăсса: «Кикки-рик-ку!» — тет. Киккирикĕ пысăк. Ури тĕклĕ. Сăмси шĕвĕр.

Сирĕн автан мĕнле?

? Автан авă... . □ăх кăтик... .






# КĂМПА.

Верукпа кăмпара пултăмăр. Эпĕ хĕрлĕ кăмпа татрăм. Ытла хитре вĕсем. Тунисем вăрăм. Шлепкисем пысăк.

Верукăн кăмписем вĕтĕ.

— Аван кăмпасем тупнă эсĕ,— тет анне Верука.

— Манăн тата хитререх! — тетĕп эпĕ.

— Шăна кăмпи татнă эсĕ, — терĕ анне.



?

шурă кăмпа
шăна кăмпи
ут тути



○ п л é

ӳт тӳ ӳп пӳ ӳс сӳ

| | | |
|---|---|---|
| у \| хӑ | тус | у \| лӑм |
| ӳ \| хӗ | тӳс | ӳ \| лӗм |
| у \| сӑ | ку \| лӑ | ту \| рам |
| ӳ \| сӗп | кӳ \| лӗ | тӳ \| рем |

# Ӳ ӳ





## ӲССЕН ЭСӖ КАМ ПУЛАТӐН?

Павлуш ӳссен тухтӑр пуласшӑн.

— Эпӗ тракт○рист пулӑп,— ӗмӗтленет Петӗр.

— Эпӗ шутламан-ха. Ӳлӗм калӑп,— тет Марук.

Эсӗ ӳссен кам пуласшӑн?

туп тўп шут шўт

| | | |
|---|---|---|
| у \| ла | тă \| рă | пу \| лă |
| ў \| ле | тў \| рĕ | пў \| лĕм |
| ўп \| ле | тў \| рем | ту \| сăм |
| хў \| ме | ту \| рам | тў \| сĕм |



○ х ё






## КЎЛĔ.

Улăхра пысăк кўлĕ пур.

Ун тавра — хурăнлăх. Шыв хĕррипе хăмăш ўсет.

Кўлĕ тарăн, шывĕ тăрă. Эпир кунта шыва кĕретпĕр.

Кўлĕре кимĕпе ишме те аван.



□ ă к ă р

ça çe çă çě çу
çар çеç çăр çěр çур

су | ха — куç — у | çă
çу | ха — çăл | куç — ӳ | сě
çӳ | хе — çě | лěк — кě | тӳ | çě

# Çç



## ÇУЛЛАХИ ÇУМĂР.

Хěвеле пěлěтсем хупларěç. Тавралăха тěксěм сăн çапрě. Çил кашласа иртрě. Çине-çинех çиçěм çиçрě. Аслати авăтрě. Шалкăм çумăр çума пуçларě.

Çуллахи çумăр ăшă. Çумăр хыççăн сывлăш уçă.





ӑ л

## ВАТТИСЕМПЕ МӐНУКӖСЕМ.

— Кукаҫи, иксӗмӗр арман тӑвар-и? — тет Павлуш.

— Тӑвӑпӑр, мӑнукӑм, тӑвӑпӑр, — тет кукашшӗ.

— Хӑҫан салма пӗҫерӗпӗр? — ӳкӗтлет кукамӑшне Ануш.

— Пӗҫерӗпӗр, пепкем, пӗҫерӗпӗр,— тет кукамӑшӗ.

Кукашшӗпе Павлуш арман тӑваҫҫӗ. Кукамӑшӗпе Ануш салма тӑваҫҫӗ.

? Санӑн кукаҫупа кукаму пур-и? Вӗсем ӑҫта пурӑнаҫҫӗ?



ч ĕ р ĕ п

ча чă чу чы чи
чан чăм чул чыс чир

| | | |
|---|---|---|
| чĕл | чăл \| ха | а \| ча |
| чĕ \| лĕ | чĕл \| хе | ар \| ча |
| чĕ \| рĕ | çăм \| ха | лар \| кăч |

# Чч



## НИНĂПА ЧĔПСЕМ.

Нина амăшĕ чăх чĕпписем илсе килчĕ. Чĕпĕсене вир пăтти килĕшет. Вĕсем ăна хыпалансах сăхаççĕ.

— Чип-чип-чип! — чĕнет вĕсене Нина.

Чĕпсем ăна часах хăнăхрĕç. Палланă сасса илтсенех, çиме васкаççĕ.

 

ч а к а́ к

## ЧĂЛХА ÇЫХНИ.

Эпĕ анне пуçланă чăлхана сыхма тытăнтăм. Çыхма пĕлмесĕр, çипписене чăлхантарса пĕтертĕм.

Анне мана:

— Ачам, малтан çыхма вĕрен, унтан тин çыхтарăп,— терĕ.

чар —
чă —
чăл —
чă —

?

— ваш
— шав
— рăш
— ха

### Ваттисен сăмахĕсем.

Ĕçчен алă ĕç тупнă.

Аллупа ĕçле, пуçупа шухăшла.



с у́ п ă н ь

н нь л ль т ть

| | |
|---|---|
| су \| пăнь | сă \| на |
| мă \| кăнь | сă \| нать |
| шу \| кăль | çу \| нат |
| ку \| кăль | у \| сă \| нать |

# Ь



## КАМ ПУÇНЕ КАÇĂРТАТЬ?

Марукпа амăшĕ тулă пуссипе пыраççĕ.

— Анне, мĕншĕн пучахсем пĕрисем çĕрелле усăннă, теприсем çӳлелле пăхаççĕ? — тĕлĕнет хĕрача.

— Тулли пучах яланах çĕрелле усăнать. Пушши кăна пуçне каçăртать,— ăнлантарчĕ амăшĕ.

**ал аль ăн ăнь ат ать**

| | | |
|---|---|---|
| хал | мă\|кăл | у\|тать |
| халь | мă\|кăль | çӳ\|рет |
| са\|хал | ту\|рат | ку\|рать |
| а\|халь | ту\|рать | ки\|лет |



м ă к ă н ь



## ÇУЛЛА.

Хĕвел тухать, улăхать
çӳллĕ тусем тăррине,
хă□ çутипе ăшăтать
тăçти-тăçти çĕрсене.

К. Иванов.



□ ы т ă

ай май ăй вăй уй туй
кай мăй суй

йăх йăм | ра хăй | ма
у | йăх йел | ме хăй | ра
ла | йăх йă | мăк сай | ра

# Йй





□ ă в á

## КАЙĂК ЙĂВИ.

Тимушпа Сантăр ирех вăрмана кайрĕç. Вĕсем хыççăн Улай та чупрĕ.

Вăрманта ачасем кайăк йăви курчĕç. Çăмартисем те пур иккен йăвара. Туссем вĕсене тивмерĕç. Тустарнă йăваран кайăкĕ сивĕнет. Çакна аван пĕлеççĕ вĕсем.

ут ун ур ул ух ус
ют юн юр юл юх юс

| | | |
|---|---|---|
| у \| па | кай | ул \| тав |
| ю \| па | ка \| ю | юл \| таш |
| ю \| рă | хă \| ю | юр \| лать |




# Юю [йу]



## ИКĔ ЮЛТАШ.

Икĕ юлташ вăрманпа пынă. Вĕсен умне упа сиксе тухнă. Пĕри йывăç çине хăпарса кайнă. Тепри çул çинчех юлнă. Вăл çĕре выртнă та вилнĕ пек пулнă.



ю м á н

**юр юн ют юл юх юс**

ю[йу]

ю[у]

| | |
|---|---|
| ун \| кă | улт \| тă |
| юн \| кун | юл \| таш |
| А \| нюк | И \| люш |
| А \| нук | Пав \| луш |

Упа ăна питĕнчен шăршласа пăхнă та пăрăнса утнă.

Упа кайсан, тепри йывăç çинчен аннă.

— Сана хăлхаран упа мĕн каларĕ?— тăрăхласа ыйтнă вăл.

— Хăрушă самантра юлташĕсенчен таракансем — начар çынсем тесе хăварчĕ,— тавăрнă лешĕ.

Л. Толстой.

## Ваттисен сăмахĕ.

Шанчăклă тусăн хакĕ çук.

## ЮМАН.

Чăваш халăхĕ юмана авалтан юратнă. Юман çинчен вăл юрăсем, юмах-








сем хывнă. Хăйĕн паттăр ывăлĕсене Юман ят панă.

Юман — питĕ çирĕп йывăç. Вăл шывра та çĕрмест. Унăн вуллипе пăрахутсем, вакунсем тунă çĕрте усă курассĕ. Юмантан паха сĕтелпукан тăвассĕ.

Юман питĕ майĕпен ӳсет.

Сыпăксенчен сăмахсем ту.

| | | | |
|---|---|---|---|
| пă- | -не | ça- | -па |
| ты- | -ши | ӳп- | -рăк |
| пар- | -мар | кăм- | -ле |

? Тулĕ — тимĕр, ăшĕ — нимĕр.






ал ан ат аш ак ас
ял ян ят яш як яс

а|ка у|яв па|ян
я|ка ту|я мă|ян

# Яя [йа]



## ПИРĔН ЯЛ.

Пирĕн ял илемлĕ вырăнта ларать. Ял хысĕнче юханшыв. Аякрах та мар вăрман.

Ял варринче Культура çурчĕ. Юнашарах — икĕ хутлă шкул, ача сачĕ.

Пирĕн ял çулсерен ӳссе, çĕнелсе пырать.






## ЙĔЛТĔРПЕ.

Йĕлме йĕлтĕр
йăлтăр-ялтăр,
шуса тухрăмăр
хире.

Юр пĕрчийĕ —
хĕл мерченĕ.
Эх, илемлĕ-çке
ирпе!

Ярăнсассăн,
пит хавассăн
таврăнатпăр
килелле.

Таврăнсассăн,
кăшт кансассăн,
кĕç тытатпăр
кĕнеке.

Мĕтри Васлейĕ.

Кирлĕ сăмахсем хушса çыр.

... хĕл çитрĕ.
Тăвайккинчен ачасен ... сасси илтĕнет.

хаваслă
сивĕ



х ă я р

ла ля на ня та тя
ал ял ан ян ат ят

я [а]
я [йа]

ву | лать шыв таппи
вы | лять ача тяппи
ка | ять Я | кур



## ÇУРХИ ИЛЕМ.

Çырма юхать кĕрлесе
аслă ялăн çумĕпе.
Хĕвел, тĕрĕ тĕрлесе,
вылять унăн шывĕпе.

К. Иванов.

е э ен не эп пе



ен|теш си|ен ен|чĕк

е|шĕл пи|леш Е|люк

Эн|тип чи|е Эл|пи

э|мел ан|не Э|лĕк

ч и е

# Ее [йэ] [э]

## ПĔЧĔК ПАХЧАÇĂ.



Елюксен пахчи пысăк. Пахчара улмуççисем, чие йывăççисем ӳсеççĕ. Елюк вĕсене тăрăшса пăхать.

Кăçал чие çырли ăнса пулчĕ. Ăна хĕлле çиме те нумай хатĕрлерĕç. Амăшĕ ĕçчен Елюка мухтать:

— Пĕчĕк пахчаçă пур пирĕн,— тет вăл.

? 1. Улма-çырларан мĕн-мĕн тăваççĕ?
2. Сирĕн пахчара мĕнле йывăççем ӳсеççĕ?



Е л ю к

эл ле ел эн не ен

| | | |
|---|---|---|
| э\|лек | Е\|люк | э\|рём |
| еп\|ле | кĕс\|ке | ан\|не |
| э\|мел | мăрь\|е | чĕ\|ре |
| эр\|не | Марь\|е | вит\|ре |

## АННЕ.



Пире кам ачашшăн
лăпкать пĕчĕкрен,
чипер çын тăвасшăн
çунать чĕререн?

Кам ыррăн, хавассăн
пурне те пире
çапла лăш курмасăр
пăхса ӳстерет?

Кам пултăр? Пĕлеççĕ
туссем вăл камне:
вăл — пирĕн телей-çке,
вăл — пирĕн анне!

А. Ĕçхĕл.

Аннесем пире телейлĕ ӳстересшĕн.






# МАРИНЕПЕ ЭНТИП.



Марине ултă çулта. Вăл шкула çÿрет. Унăн Энтип ятлă шăллĕ пур. Вăл виççĕре çеç-ха.

Марине — ĕçчен хĕрача. Вăл хăех чăлха çыхрĕ. Ăна шăллĕне парнелерĕ.

Мĕн тери савăнчĕ Энтип!



Ваттисен сăмахĕсем.

Ăсти епле, ĕçĕ те çапла.
Ĕçченĕн ĕçĕ ăнсах пырать.



○ р □ ○ е н

а у ы и е э ё о

| | | |
|---|---|---|
| Во\|ва | хор | О\|ля |
| Ко\|ля | ки\|но | ка\|ток |
| у\|рок | паль\|то | конь\|ки |

# Оо



## ЧĔРЧУН КĔТЕСĔ.

Пирĕн шкулта чĕрчун кĕтесĕ пур. Унта кроликсем те пурăнаççĕ. Вĕсене Коля Смирнов пăхать.

Коля кроликсене апат парать, читлĕхĕсене тасатать.

Кроликсем пахчаçимĕç, утă çиеççĕ.

от то ток ор ро хор



к р ◯ л и к

паль|то ка|ток

пи|о|нер конь|ки

хок|кей мо|тор



## КОНЬКИПЕ.

Вĕççе пырап конькипе:
хăлхасем хĕп-хĕрлĕ.
Чăр-чар чĕрсе пынипе
пăр çийĕ пит йĕрлĕ.

Йăлтăр-ялтăр çиçĕм пек
йăр та яр пыратпăр.
Алла-аллăн тытăнса,
савăнса ярнатпăр.

Астумасăр хăш чухне
такăнса ӳкетпĕр.
Кĕç тăратпăр та каллех
çиçĕм пек вĕçетпĕр.

А. Çулĕç.



с|а|м|о|л|ё|т

то тё ло лё фо фё

са|мо|лёт фор|ма
пи|лот мон|тёр
шо|фёр мо|тор

ё [о]



## МĔНЛЕ СĂМАХ ÇЫРНĂ?

Виçĕ лётчик тĕл пулчĕç те калаçса кайрĕç.

— Часах вĕçетпĕр эппин,— терĕ пĕри.

— Тепĕр уйăхран. Эсĕ мĕнле саспаллинче вĕçетĕн? — ыйтрĕ тепри.





лётчик

— «М» саспаллинче.

— Эпĕ «И» саспаллинче.

— Эпĕ вара «Р» саспаллинче вĕçетĕп,— сăмах хушрĕ виççĕмĕш лётчикĕ.

Пĕр уйăх иртсе кайрĕ. Çынсем уява тухрĕç.

Сасартăк тӳпе кĕрлесе кайрĕ. Сенкер тӳпере виçĕ пысăк саспалли ярăнса пырать. Малта «М», ун хыççăн «И», юлашкинчен «Р» саспалли.

Мĕнле сăмах пулчĕ?

Л. Кассиль.

Кирлĕ саспаллисем хушса çыр.

Л . ня л . тчик пуласшăн. Вăл самол . тпа вĕçесшĕн.



# КУН ЯЧĔСЕМ.



Эрнере ҫичĕ кун. Кашни кунăн хăйĕн ячĕ пур.

Эрне тунтикунтан пуҫланать. Ҫак кун эпир пурте шкула килетпĕр.

Эпир ултă кун вĕренетпĕр. Вĕсем ҫак кунсем: тунтикун, ытларикун, юнкун, кĕҫнерникун, эрнекун, шăматкун.

Вырсарникун эпир канатпăр.

# ЙĔРКИПЕ КАЛАМА ХĂНĂХ.

— Кун ячĕсене йĕркипе калама пĕлетĕн-и? — ыйтрĕ учитель Алĕшăран.







Алёша чылайччен шухăшласа тăчĕ.

— Пĕлетĕп,— терĕ.

— Вĕсене йĕркипе кала,— хушрĕ учитель.

— Юнкун, вырсарникун, тунтикун, эрнекун, шăматкун...,— тет Алёша.

Алёша кун ячĕсене йĕркипе каланă-и?

## Çырса ил те асра тыт.

Эрнере çичĕ кун. Вĕсен ячĕсем: тунтикун, ытларикун, юнкун, кĕçнерникун, эрнекун, шăматкун, вырсарникун.




□ Л О К Н О́ Т

па ба пу бу пи би

бан-ка бинт бул-ка

па-ян пи-леш у-па

ба-ян би-лет Лю-ба

# Бб



БИБЛИОТЕКĂРА.

Ĕнер эпир библиотекăра пултăмăр. Пирĕн библиотекарь — Альбина Борисовна. Вăл пире библиотекăпа паллаштарчĕ.

Библиотекăра чăвашла, вырăсла кĕнеке нумай.

? Ани шурă, вăрлăхĕ хура. 





□ а □ я □

# ТЕАТРА КАЯТПĂР.

— Борис, эсӗ шăматкун мӗн тăватăн?

— Эпир Люба аппапа балет курма каятпăр.

— Мӗнле балет пăхасшăн эсир?

— Аппа «Сарпике» балета кăмăллать. Вăл билечӗсене те илнӗ ӗнтӗ.

— Эпир аннепе пуканесен театрне каятпăр.







Кирлӗ саспаллисем хуш.




| | | | |
|---|---|---|---|
| п ? | .улă | у.а | .улка |
| б | .алан | ку.а | .алет |



г о р н

ка га ке ге ко го

ла|герь клум|ба
горн Гла|ша
ге|рой Гри|ша
ге|ор|гин Га|га|рин

# Гг



е о р г и н





## ПĔРРЕМĔШ КОСМОНАВТ.

Шупашкарта Гагарин урамĕ пур. Урам варринче — Гагарин палăкĕ.

Кам-ха вăл Гагарин? Мĕнпе чапа тухнă вăл?

Юрий Алексеевич Гагарин — космонавт, совет çынни. Вăл тĕнче уçлăхне чи малтан вĕçсе хăпарнă.



## ПЫТАНМАЛЛА ВЫЛЯНИ.

Ачасем картишне тухрĕç. Хураçка та вĕсенчен юлмарĕ.

— Атьăр пытанмалла выляр,— сĕнчĕ Галя.

— Эпир Генăпа пытанăпăр, эсĕ пире шыра,— терĕ Коля.

Гена кĕлет хыçне пытанчĕ. Коля тĕм хыçне лăпчăнчĕ.

Хураçка ăçта пытанчĕ-ши?

## ШУТ САВВИ.

Пĕрре — пĕрне,
иккĕ — икерч,
виççĕ — виçе,
тăваттă — тăваткал,
пиллĕк — пилеш,
улттă — улма,
çиччĕ — çилĕм,
саккăр — салма,
тăххăр — тăрна,
вуннă — тух!



та да то до ти ди

| | |
|---|---|
| дос \| ка | до \| ми \| но |
| Ли \| да | Ди \| ма |
| ди \| ван | ор \| ден |
| бри \| га \| да | бри \| га \| дир |

□ о с к а́

# Д д





□ и в а н

## ХАСТАР БРИГАДИР.

Данил Степанович — трактористсен бригадирĕ. Вăл кашни ирех ĕçе васкать.

Ĕç нумай бригадăн. Хĕлле тракторсене юсамалла. Çуркунне — чи хĕрӳ вăхăт, ака-суха вăхăчĕ.

Данил пичче бригади ăмăртура яланах малта.



## ДИМĂПА АСЛАШШĔ.

— Шутла-ха, ҫынна алă мĕн тума кирлĕ? — ыйтрĕ пĕррехинче аслашшĕ.

— Мечĕкле выляма,— шухăшламасăрах хуравларĕ Дима.

— Тата мĕн тума-ши? — тĕпчерĕ аслашшĕ.

— Кашăк тытма.

— Тата мĕн тума?

— Юханшыва вĕтĕ чулсем пеме.

Тĕрĕсех хуравларĕ Дима. Анчах алă ĕҫлеме кирлине вăл пĕлеймест-ха.

Е. Пермяк.

? Тăваттăн пÿрте кĕреҫҫĕ, пĕри чăлана кĕрсе юлать.



з в е н о́

за зе зо зу зы зи

са | сă
ва | за
Зи | на
Си | ма

зо | о | парк
слон
зве | но
зна | чок

# Зз



## ĔÇЧЕН ПИОНЕРСЕМ.

Çулла пионерсен звени колхоз пахчинче ĕçлерĕ. Ачасем çум çумларĕç, йăрансене кăпкалатрĕç.

Пахчана шăварма колхозăн çумăр агрегачĕ пур. Вăл ĕçлеме тытăнсанах, çумăр пĕрĕхме тытăнать.

Тăрăшни сая каймарĕ. Тухăçлă пахчаçимĕç ӳстерчĕ пионерсен звени.






# АРĂСЛАНПА ЙЫТĂ ÇУРИ.

(Чăн пулни.)

Зоопаркра тискер кайăксем кăтартнă. Пĕр çын йытă çури илсе пынă. Йытă çурине арăслан читлĕхне янă.

Арăслан йытă çурине тивмен. Вĕсем пĕрле апат çинĕ, пĕрле çывăрнă.

Йытă çури зоопаркра пĕр çул пурăннă. Çулталăк иртсен, вăл чирлесе вилнĕ.

Арăслан апат çиме пăрахнă. Вăл йытă çурине ыталанă та пилĕк кун хускалмасăр выртнă.

Улттăмĕш кунне арăслан вилнĕ.

Л. Толстой.



ш а р

ва фа ву фу ве фе

| | |
|---|---|
| шав | ву \| тă |
| шарф | фут \| бол |
| Ве \| ня | торф |
| Фе \| ня | гра \| фин |

# Фф



## ФЕРМĂРА.

Феня аппа фермăра ĕçлет.

Фермăра яланах тирпейлĕ. Урайне пăчкă кĕрпи сарнă, стенисем шап-шурă.

Сыснасем патне апат пĕчĕк вакунсемпе илсе пыраççĕ.

Феня аппа сыснисем шултра, ăратлă.

Кăçал Феня аппана «Ĕç мухтавĕ» орден пачĕç.





теле_óн

# СВЕТОФОР.

Пĕррехинче эпир хулара пултăмăр. Урам урлă каçма тăрсан, анне тăпах чарăнчĕ.

— Мĕншĕн? — тĕлĕнтĕм эпĕ.

— Курмастăн-им? Авă светофор çине пăх,— хуравларĕ анне.

Чăнах та, светофорăн хĕрлĕ куçĕ çунать иккен.

— Нумай кĕтмелле-и? — тĕпчетĕп эпĕ.

— Кăштах тăхтар. Машинăсем иртĕç, вара эпир те хускалăпăр.

Светофор çинчен куçа илместпĕр. Акă унăн сарă куçĕ, унтан симĕсси çуталчĕ. Вара эпир те урам урлă каçрăмăр.

Б. Житков.




□ у р н á л

шу жу ши жи ше же

| | |
|---|---|
| Же\|ня | жи\|лет |
| ё\|шен\|нё | ши\|нель |
| Жуч\|ка | жи\|раф |
| ă\|шă | ши\|фер |

# Жж



## ХИСЕПЛĔ ÇЫНСЕМ.

Атнер пичче — платник те, слесарь те. Женя аппа — ăста çĕвĕç.

Кăçал вĕсем çĕнĕ çурт лартрĕç. Çурчĕ кирпĕчрен, пӳлĕмĕ нумай. Кухньăра — газ, холодильник. Шыв урамран пăрăх тăрăх пӳртех кĕрет.

Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр.

ча ца чи ци че це



□ й р к у л ь

цех — стан|ци

цирк — стра|ни|ца

а|ка|ци — кон|церт

# Цц



## ЦИРКРА.

Канмалли кун ашшĕпе Федя цирка кайрĕç.

Халиччен Федя циркра пулман. Тĕлĕнмелли нумай кунта. Арăслансем унка витĕр сикеççĕ. Клоун тĕрлĕ мыскара туса култарать. Упа та ташлать иккен циркра.

Цирк Федьăна питĕ килĕшрĕ.

щa щу щĕ щё щи



□ ё т к а

плащ мун|ча шă|чă
е|щĕк пах|ча шу|кăль
чăл|ха ра|ща щёт|ка

# Щщ



Пурăнать пулсассăн
туслă
супăньпе,
шăл щёткипе,—
ку ача вăл
питĕ ăслă,
питĕ кăмăллă,
чипер.

В. Маяковский.

Хăвна таса тыт —
сывлăхлă пулăн.

хаваслă
пысăк
çĕнĕ
пĕчĕк

____ плащ ____ концерт

____ щётка ____ цирк





п л а

# ПУЛТАРУЛЛĂ АЧАСЕМ.



Март уйăхĕ. Уроксем пĕтрĕç. Анчах ачасем киле васкамарĕç.

Хĕрӳ ĕç пуçланчĕ. Пĕрисем ещĕксене тăпра тултараççĕ. Теприсем помидор, купăста вăрри акаççĕ. Хĕрачасем шăвараççĕ.

Часах кашни ещĕкрех ем-ешĕл калча çĕкленĕ. Пахчара çĕр ăшăнса çитĕ. Ачасем калчасене йăрансем çине куçарĕç.

Кирлĕ саспаллисем хушса çыр.

Шăп.ăк, кăсă., уй.п, çер.и, х.лат.

се съе ня нъя зе зъе

кĕсъе Тăванъел
Мăнъял съезд
Патăръел разъезд

## КРЕПКОВ КОМИССАР.

Ъ

Граждан вăрçи чăваш çĕрне те çитнĕ. Шурă çарсем Йĕпреç патĕнчи разъезд еннелле тапăнса пынă. Шуррисен çулне Крепков отрячĕ пӳлнĕ...

Лăпкăн çывăрать Кĕçĕн Патăръел. Хĕрлĕ салтаксем — тутлă ыйхăра.

Сасартăк пăшал сасси кĕрлеме тытăнать.

Крепков комиссар юлташĕсене чакма хушать. Хăй, пулемётпа пере-пере, тăшмана чарса тăрать.

Часах Йĕпреçрен пулăшу çитет. Анчах нумай паттăр ĕмĕрлĕхех куçне хупнă. Вĕсем хушшинче—Крепков комиссар та.

# ВУЛАТПĂР, ÇЫРАТПĂР.







Шурă юр ирĕлет,
çеçенхир чĕрĕлет,
ешĕл курăк ӳсет...
Ку хăçан пулать-ши?

Хĕвел хытă хĕртет,
ăшă çил вĕркелет,
сар ыраш çитĕнет...
Ку хăçан пулать-ши?

## ÇУЛТАЛĂК.

Çулталăкра вуникĕ уйăх. Вĕсен ячĕсем:

| | |
|---|---|
| январь | июль |
| февраль | август |
| март | сентябрь |
| апрель | октябрь |
| май | ноябрь |
| июнь | декабрь |

Çу уйăхĕсем: июнь, июль, август.
Кĕр уйăхĕсем: сентябрь, октябрь, ноябрь.
Хĕл уйăхĕсем: декабрь, январь, февраль.
Çур уйăхĕсем: март, апрель, май.



Хир илемĕ каять,
сĕм вăрман çаралать,
пĕрмай çумăр çăвать...
Ку хăçан пулать-ши?



Хирсенче юр анчах,
çырмара пăр анчах,
сивĕтет аванах...
Ку хăçан пулать-ши?

К. Иванов.

? Пĕр йывăçăн 12 турат. Кашни турачĕ çинче 4 йăва. Кашни йăвара 7 çăмарта.



Çĕнĕ çул январĕн пĕрремĕшĕнчен пуçланать.

Çулталăкăн юлашки кунĕ — декабрĕн вăтăр пĕрремĕшĕ.

Кашни уйăхра вăтăр е вăтăр пĕр кун. Февраль çеç çирĕм сакăр е çирĕм тăхăр кунлă.

Кашни уйăхăн тăршшĕ тăвата эрне ытларах.



## ÇУРКУННЕ.

Килчĕ ырă çуркунне,
килчĕ ячĕ ăшăтса.
Хĕвел савать тĕнчене,
хĕл ыйхинчен вăратса.

Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет,
ешĕл тумтир тăхăнать,
çеçенхир те ешерет,
илемĕпе мухтанать.

К. Иванов.

Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем çыр.

1) Ăшă, ырă ... .
2) Сивĕ, хаяр ... .
3) Ылтăн, тулăх ... .

хĕл
кĕркунне
çуркунне





## ИВАН ЯКОВЛЕВИЧ ЯКОВЛЕВ.

Чăваш çырулăхне йĕркелесе яракан çын Иван Яковлевич Яковлев пулнă. Вăл чăваш ачисем валли букварь çырса кăларнă. Унтанпа çĕр çул иртрĕ ĕнтĕ.

Чĕмпĕрти гимназире вĕреннĕ чухнех Яковлев хăйĕн хваттерĕнче шкул уçнă. Вăл уçнă чăваш шкулĕ ӳссех пынă. Малтанхи чăваш учителĕсем çак шкулта вĕреннĕ.

Чăвашла кĕнекесем кăларма, шкулсем уçма, учительсем хатĕрлеме çăмăл пулман. Патша чăваш пек вак халăхсене çутта кăларасшăн пулман. Тăван халăха вĕрентес ĕçе Иван Яковлевич пĕтĕм вăйне панă.

Кирлĕ саспаллисем хушса çыр.

1) Феня аппа ☐ермăра ĕçлет.
2) Анне ☐уфайка çĕлет.

 

# ЧĂВАШ ХАЛĂХ СĂВĂÇИ.

Константин Васильевич Иванов — чăвашсен чаплă сăвăçи. Унăн «Нарспи» кĕнекине халăх юратса вулать. Ăна вырăсла, тутарла тата ытти чĕлхесене куçарнă.

К. В. Ивановăн пултарулăхĕ нумай енлĕ пулнă. Вăл ялти шкултах ӳкерчĕксем тума юратнă, сăвăсем çырнă. Каярахпа Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ, ĕçленĕ. Кунта вăл И. Я. Яковлева пулăшнă: чăвашла букварь валли ӳкерчĕксем тунă.

Чăваш халăхĕ Константин Иванова ăшă кăмăлпа асăнать.

Кирлĕ сăмахсем хушса çыр.

| | |
|---|---|
| 1) Анюк ... ялĕнче пурăнать. | Шупашкар |
| 2) Аппăшĕ ... хулинче вĕренет. | Кинчер |
| 3) ... варринче утравсем пур. | Атăл |



# СЕНТТИ.

Чипер ача Сентти пур,
чупса çӳрет урамра.
Кĕвентине утланса,
ача вылять лашалла.

Аслă урам тăршшĕпе
чиксĕр тусан кăларать,
хура чикан пек хура
каçпа киле таврăнать.

Чипер ача Сентти пур,
чупса килет лашипе,
хăйĕн пĕчĕк чĕлхипе
пакăлтатать инкĕшпе.

К. Иванов.

Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем хуш.

1) ... Сентти лашалла вылять.
2) ... тилĕ вăрманта пурăнать.
3) ... çумăр çăвать.
4) ... урамра тирексем ӳсеççĕ.

чее
пĕчĕк
аслă
ăшă

Сыпăксем хушса, сăмахсем ту.

Сĕ..., хĕ..., ав..., ар..., ал..., ме..., чĕ... .



## ЧĔКЕÇ.

Чĕкеç, чĕкеç, чĕкеçĕ,
кунĕпе вĕçсе çӳрет вăл,
пĕртте канма пĕлмест вăл,
шăна-păван пуçтарать,
чĕпписене тăрантарать.

К. Иванов.

### Предложенисене уйăрса çыр.

Çуркунне çитрĕ кайăксем ăшă енчен вĕçсе килчĕç вĕсем васкасах йăва çавăраççĕ.

### Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем туп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| пĕчĕк | лайăх | тĕттĕм | инçе |
| аякра | тĕксĕм | аван | вĕтĕ |




## ЧӐВАШ ХАЛӐХӖН ТУСӖ.

Илья Николаевич Ульянов — вырӑс ҫынни, аслӑ Ленин ашшӗ. Вӑл И. Я. Яковлевӑн тусӗ, пулӑшаканӗ, хӳтӗлекенӗ.

Илья Николаевич Чӗмпӗр тӑрӑхӗнчи халӑх шкулӗсен инспекторӗ пулнӑ. Вӑл шкулсем мӗнле ӗҫленине тӗрӗслесе ҫӳренӗ. Нумай ҫӗрте Ульянов ҫӗнӗ шкул уҫнӑ.

Ҫӗмӗрле районӗнчи Хутар шкулне те Илья Николаевич тӑрӑшнипе уҫнӑ. Вӑл Хутарти шкула яланах асра тытнӑ. Унта кӗнекесем ярса панӑ. Ачасем мӗнле вӗреннине тӗрӗслеме пыра-пыра ҫӳренӗ.

Предложенисем йӗркелесе ҫыр.

1) ҫӗнӗ, вӗренетпӗр, шкулта, эпир.
2) таса, классем, та, ҫутӑ, шкулта.



## УЛЬЯНОВ УҪНӐ ХУТАР ШКУЛӖ.

Пыр Хутара,
унта пур паллӑ шкул.
Хыв ҫӗлӗкне,
кӗр васкамасӑр!

Ларать вӑл ӗнтӗ
ҫӗр те ҫирӗм ҫул...
Ларать ҫиле те,
ҫумӑра та пӑхӑнмасӑр.

Ларать вӑл
палӑк пек мӑнаҫлӑн,
тата та вӑрӑм
пултӑр ун кунҫулӗ!

Колхозниксем
ҫак шкул пирки калаҫҫӗ:
«Ульянов шкулӗ!
Ленин ашшӗн шкулӗ!»

Стихван Шавли.

Предложенисене улӑштарса ҫыр.

Т ӗ с л ӗ х. Ача кӗнеке вулать.—
Ачасем кӗнеке вулаҫҫӗ.

Пионер Тӑван ҫӗршыва юратать.
Вӑл лайӑх вӗренет.





## ЛЕНИН АТТЕ.

Ирĕк, савăк пурăнмашкăн
Советсен çĕршывĕнче.
Халь хисеплĕ халăх эпĕр
мĕнпур халăх йышĕнче.

Калаçма именесси те
тăрса юлчĕ ĕлĕке.
Ирĕккĕн, илемлĕн, уççăн
янăрать пирĕн чĕлхе.

Çиçĕм пек çиççе çутатрĕ
Ленин шухăшĕ пире.
Вăл яри уçса кăтартрĕ
çĕнĕ ĕмĕрти ире.

И. Ивник.

Владимир Ильич Ленин Чĕмпĕрте çуралнă. Халĕ çав хулана Ульяновск теççĕ.



ТУС.

Çак кун Володя гимназие иртерех пычĕ. Класра шăв-шав, ачасем кулаççĕ, хыттăн калаçаççĕ. Пĕр ача кăна парта хушшинче ютшăнса ларать.

Володя ăна пĕрремĕш хут курать. Анчах унăн салху та ĕшенчĕк сăнне асăрхарĕ те çак ача Митя Андриянов пулнине тавçăрса илчĕ. Çĕркаç кăна Илья Николаевич ун çинчен каласа панăччĕ.

Чĕмпĕрти гимназие вĕренме кĕртес тесе, ашшĕ Митьăна Кавказран илсе килнĕ иккен. Хăй сасартăк вилсе кайнă. Митя аякри тăванĕсем патĕнче пĕчченех тăрса юлнă. Ĕнер унăн ашшĕне пытарнă, паян вăл пĕрремĕш хут гимназие пынă.

Володя Митьăна çав тери хĕрхенчĕ. Унпа юнашар пырса тăчĕ.

— Пĕлетĕп, санăн инкекӳ питĕ пысăк,— шеллесе каларĕ вăл.

Митя хурлăхлăн макăрса ячĕ. Мĕн калама пĕлес-ха Володьăн? Çакăн пек пысăк хуйха сăмахпа сирсе яраймăн. Митьăна унăн мĕнпе те пулин пулăшас килчĕ.

—Килĕшетĕн-и, кăранташусене шĕвĕртсе парам,— сĕнчĕ вăл.

Володя шăппăн Митя çумне ларчĕ. Часах вăл Митьăн кăранташĕсене пурне те шĕвĕртрĕ. Çак хушăра Митя кăшт лăпланчĕ. Вăл шавлă класра тинех пĕччен мар. Унпа юнашар шанчăклă тусĕ пур.

Л. Кон.





# СОВЕТ ÇĔРШЫВĔ.

Эпир Совет çĕршывĕнче пурăнатпăр. Кĕскен пирĕн Тăван çĕршыва ССР Союзĕ е СССР теççĕ.

Пирĕн Тăван çĕршыв çав тери анлă.

Çĕршывăн хĕвеланăç чиккинчен хĕвелтухăçне пуйăс эрне ытла каять. Кунсерен 20 çухрăм утсан, çак çула çулталăкра та утса тухас çук.

Пирĕн çĕршывра çĕр вăтăра яхăн халăх пурăнать. Кашниех хăй чĕлхипе калаçать. Вĕсем хушшинче — вырăссем, украинецсем, белоруссем, тутарсем... Çав шутрах эпир те — чăвашсем.

Предложенисене уйăрса çыр.

Пирĕн Тăван çĕршывăн ялавĕ хĕрлĕ тĕслĕ ун çине çурлапа мăлатук ÿкернĕ.



## СОВЕТ СОЮЗĔН ГИМНĔ.

Нихçан арканми Союза пĕрлештерне
пур ирĕк республик(ă)сене Аслă Русь.
Сыв пултăр тăван халăхсем çитĕнтернĕ
пĕр йышлă, хăватлă Советлă Союз!

Чаплă, мухтавлă пул, ирĕк Çĕршывăмăр.
Халăхсен туслăхĕ — çирĕп тĕрек!
Ленинăн партийĕ — пирĕн хăватăмăр —
çут коммунизма илсе çитерет...

Пирĕн Тăван çĕршыв мĕн ятлă?
Пирĕн çĕршывра мĕнле халăхсем пурăнаççĕ?

Предложенисем ту. Çырса ил.

1) çĕршыв, пирĕн, Тăван, пысăк, питĕ.
2) пурăнаççĕ, халăхсем, туслă, çĕршыври, пирĕн.





# МУСКАВ.

Мускав — Совет çĕршывĕн тĕп хули. Çĕр чăмăрĕн пур кĕтесĕнче те ĕççыннисем Мускава юратаççĕ.

Мускав — тĕнчери чи пысăк хуласенчен пĕри. Хула варринче — Кремль. Кремль йĕри-тавра чул хӳме.

Пирĕн çĕршыври чи хисеплĕ вырăн — Хĕрлĕ площадь. Хĕрлĕ площадьре халăх çĕнтерӳçĕсене чыслать. Кунтах пĕрремĕш космонавтсене кĕтсе илнĕ...

Урăх çĕршывсенчен килнĕ туссем те чи малтан Хĕрлĕ площаде пыраççĕ.

И. Митяев.

Кирлĕ çĕрте çемçелĕх палли çыр.

1) Хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет... .
2) Пичче Мускавра пурăнат... .



## ТӐВАН ҪӖРШЫВ.

Хамӑр пурӑнакан ҫӗршыва эпир Тӑван ҫӗршыв тетпӗр. Кунта пирӗн асатте-асанне, атте-анне ҫуралнӑ. Кунта эпир тӑван чӗлхепе калаҫатпӑр, ҫыратпӑр, вулатпӑр. Ҫак ҫӗршывра пире пурте тӑван.

Эпир хамӑр ҫӗршыва анне тетпӗр. Вӑл пире хӑйӗн ҫӑкӑрӗпе тӑрантарса ӳстерет, хӑйӗн шывне ӗҫтерет...

Тӗнчере, пирӗн ҫӗршывсӑр пуҫне, урӑх ҫӗршывсем те пур. Анчах этемӗн амӑшӗ пӗрре кӑна, Тӑван ҫӗршывӗ те унӑн пӗрре ҫеҫ.

К. Ушинский.

Предложенисене уйӑрса ҫыр.

Пирӗн Тӑван ҫӗршыв пысӑк унта тӗрлӗ халӑх пурӑнать эпир Тӑван ҫӗршыва юрататпӑр.



# КАРĂШПА КАЮРА.

Пĕчĕк карăш аякри ăшă енчен тăван çĕршывне, çурçĕре, васканă. Карăш çулла пирĕн тăрăхра чĕпĕ кăларать. Хĕл касма вара инçетри Африкăна вĕçсе каять.

Карăша вĕçме йывăр. Унăн çуначĕсем пĕчĕк. Вăл тĕллĕн-тĕллĕн вĕçет, тĕллĕн-тĕллĕн çуран утать.

Çул çинче карăш каюрана тĕл пулнă.

— Кам эсĕ? Ăçталла çул тытатăн? — ыйтнă карăшран каюра.

— Эпĕ — карăш, ăшă енчен тăван çĕршыва таврăнатăп.

Карăш каюрана аякри Африка çинчен каласа панă.

— Мĕншĕн эсĕ яланах ăшă çĕршывра пурăнасшăн мар? — тĕлĕннĕ каюра.— Мĕншĕн çулсерен пиншер çухрăмран вĕçсе ки-



летĕн? Урусене те юн тухичченех амантса пĕтернĕ. Хурчка та тытма пултарать сана. Мĕншĕн эсĕ ҫак тертсене куратăн? Мĕн илĕр-тет сана сивĕ ҫĕре?

— Тăван ҫĕршыв,— хуравланă карăш.

В. Сухомлинский.

Предложенисем туса ҫыр.

| | |
|---|---|
| 1) Автан ... . | какалать |
| 2) Хур ... . | авăтать |
| 3) Вăкăр ... . | макăрать |
| 4) Ача ... . | мĕкĕрет |

Предложенисенчен калав йĕркеле.

Симĕс курăк ҫĕкленет.
Хĕвел хĕртсе пăхать.
Юр ирĕлсе пĕтрĕ.
Ҫуркунне ҫитрĕ.



# ЮРАТНĂ ÇĔРШЫВĂМĂР.

Юрататпăр эпир, чăвашсем, хамăрăн республикăна. Унăн улăхĕсене, вăрманĕсене, юханшывĕсене юрататпăр.

Чăвашсем çĕре анне теççĕ. Вĕсем мĕн авалтанпах çĕр ĕçлесе пурăннă.

Чăваш вăрманĕсем питĕ пуян. Вăрманта улма-çырла, мăйăр, кăмпа иксĕлми. Унта тĕрлĕ тискер кайăк нумай.

Пирĕн халăх авалтанпах хăйĕн кӳршисемпе туслă пурăнать. Вырăс халăхне вăл аслă пиччĕшĕ вырăнне хурса хисеплет.

Юхма Мишши.

Кирлĕ сăмахсем хушса, хăвăн адресна çыр.

Чăваш АССРĕ, ... районĕ, ... ялĕ, ... урамĕ, ... ... ... .

 

## ПИРĔН МУХТАВЛĂ ЕНТЕШ.

Василий Иванович Чапаев — граждан вăрçи геройĕ. Вăл Будайка ялĕнче çуралнă. Халĕ вăл ял Шупашкар варрине кĕрсе юлчĕ.

Чапаев Совет влаçĕшĕн кĕрешсе чапа тухнă.

Василий Иванович ăслă та хăюллă командир пулнă. Ăна салтаксем юратнă.

Чапаев ертсе пыракан çарсем нумай çапăçура çĕнтернĕ. Анчах та пĕр çапăçура хăюллă командира вăйлă амантнă. Аманнă Чапаев Урал шывĕнче путса вилнĕ.

Совет халăхĕ хăйĕн мухтавлă ывăлне манмасть. Шупашкарта, ăна асăнса, чаплă палăк лартнă.

Кирлĕ саспаллисем хушса çыр.

Чапаев — граждан вăрçи .еройĕ.
Вăл хăюллă коман.ир пулнă.



## НАТАЛИ КĔПЕ ТĔРЛЕТ.

Натали кĕпе тĕрлет.
Кам валли
çав тери хитрелетет
Натали?
Тап-таса юр евĕрлĕ
шур пире
хĕрлĕ, симĕс çиппеле
вăл тирет.
Сарăпа сенкер хушать
тĕлĕпе.
Ку хĕвел пек курăнать,
пĕлĕт пек.

Петĕр Хусанкай.

Кирлĕ çĕрте çемçелĕх палли çыр.

Марине тĕрĕ тĕрлет... . Тĕрри хитре пулат... . Ваçук кимĕ ăсталат... .




## ВИÇÇĔМĔШ КОСМОНАВТ ЛЁТЧИК.

Андриян Григорьевич Николаев — виççĕмĕш космонавт лётчик. Совет Союзĕн Геройĕ ятне вăл икĕ хут илчĕ. Хăйĕн ытти космонавт тусĕсем пекех, Андриян—хăюллă çын. Вăл — совет саманинче ӳссе çитĕннĕ кăйкăр кайăк. Уçлăхри ячĕ те унăн — «Кăйкăр».

Чăваш ачисемшĕн Андриян Николаев уйрăмах çывăх. Вăл пирĕн ентеш-çке!

Паттăр космонавтăн тăван ялĕ—Шуршăл. Шуршăл хитре вырăнта вырнаçнă. Ял урамĕсем тирпейлĕ, ешĕл йăмраллă. Ял çумĕпех Çавал шывĕ юхса иртет.

Андриян Николаев вĕреннĕ Шуршăлти шкулта халĕ музей. Музейра космонавт вĕреннĕ класс, вăл ларнă парта пур. Шуршăлти колхоз та космонавт ячĕпе хисепленет.

Юхма Мишши.



## ПИРĔН МАЙ.

Йăл кулать хĕвелĕ,
ялкăшать тĕнче.
Ялавпа тухатпăр
Май уявĕнче.

Ирĕк те мухтавлă,
чаплă ĕмĕре
савăнса мухтатпăр
юрă-кĕвĕре.

Иван Ивник.

Предложенисене уйăрса çыр.

Совет çыннисем уява тухнă вĕсен аллисенче чечексем, ялавсем çынсен сăн-пичĕ савăнăçпа çиçет.

Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене туп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| вăрăм | çăра | салху | начар |
| хура | шултра | аван | хавас |
| шĕвĕ | шурă | усал | пысăк |
| вĕтĕ | кĕске | пĕчĕк | ырă |

 

## ÇĔНТЕРӲÇĔ САЛТАК.

Çĕнтернĕ салтак фашистсене. Çĕнтерӳçĕ пулса çитнĕ вăл Берлина.

— Мухтав совет салтакне! — саламланă ăна Берлин çыннисем.

Салтак инçетри хуларан килне таврăннă. Берлин çыннисем ăна сума суса палăк лартнă. Салтак аллинче хĕç, кăкăрĕ çумне вăл пĕчĕк хĕрачана çупăрланă. Совет салтакĕ халăхсене фашистсенчен хăтарнине пурте асра тытчăр!

Ăçта кăна çук-ши совет салтакне сума суса лартнă палăксем! Югославире, Польшăра, Румынире, Венгрире, Болгарире, Чехословакире...

С. Баруздин.



Сирĕн ялта вăрçăран килмен салтаксене асăнса лартнă палăк пур-и? Палăк çинчен каласа пар.

Предложенисене уйăрса çыр.

Тăван çĕршывăн аслă вăрçи тăватă çул пынă ку вăрçăра совет çыннисем паттăррăн çапăçнă вĕсенчен нумайăшĕ киле таврăнайман.

## ПĔРТĂВАН ПАТТĂРСЕМ.

Муркаш районĕнчи Исетерккĕ ялĕнчи Татьяна Николаевнăпа Алексей Илларионович сакăр ывăл пăхса ӳстернĕ. Саккăрăшĕ те вĕсем Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă.

Иван вăрçăн пĕрремĕш кунĕнчех пуçне хунă. Шăллĕ вилнине пĕлсен, Кĕркурипе Александр хăйсен ирĕкĕпе фронта кайнă.



Хĕрӳ çапăçура Кĕркурин пурнăçĕ те татăлнă. Вилнĕ хыççăн ăна Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

Якур пĕр çапăçура тăшман дзотне хăй ӳчĕпе хупланă. Павăл та Тăван çĕршыва хӳтĕлесе вилнĕ. Флорпа Родион вăрçăра йывăр аманнă. Вĕсем те вăхăтсăр çĕре кĕнĕ.

Александрпа Михаил та вăрçăра паттăр çапăçнă. Вĕсем халĕ Шупашкарта пурăнаççĕ.

Сакăр паттăр ятне ял çыннисем яланах асра тытаççĕ. Ялти пĕр урама Алексеевсен ятне панă. Урам вĕçне, паттăрсен амăшне асăнса, палăк лартнă.

### Çырса ил.

Пире вăрçă кирлĕ мар,
миршĕн пурте кар тăрар!



## ҪĔНĔ ПУРНĂҪ КАЛЧИСЕМ.

Ылтăн тумлăн ялкăшса
килчĕ тулăх кĕркунне.
Ларса тухнă савăнса
эпир парта хушшине.

Шкулĕ ҫутă, тап-таса,
пĕтĕм кăмăл ҫĕкленет.
Вĕренетпĕр тăрăшса
эпир халĕ кулленех.

Иван Ивник.

## ҪĂЛТĂР ҪИНЧЕН.

— Куратăн-и? — ыйтрĕ Вова мăнаҫлăн. Унăн кăкăрĕ ҫинче хĕрлĕ ҫăлтăр ялкăшать.

— Эпĕ октябрёнок. Октябрёнокла пурăнма пуҫлатăп!



— Октябрёнокла мĕнле пурăнмалла?

— Эх, эсĕ те ҫав! Октябрёноксен хăйсен правилисене пĕлмелле. Пулас пионер вĕт эпĕ. Ăнлантăн-и? Октябрёнокăн хаваслă пурăнмалла, ĕҫрен хăрамалла мар, аслисене пулăшмалла. Тӳрĕ кăмăллă пулмалла.

— Тата мĕн тумалла?

— Тăрăшса вĕренмелле, туслă пурăнмалла.

— Эпĕ октябрёнокла пурăнма пултаратăп-и?

— Мĕнле калас, пултаратăн пуль... Акă эпĕ паян урай шăлса тухрăм. Эсĕ те ҫакна тума пултаратăн вĕт.

— Паллах, пултаратăп.

— Куратăн-и, эсĕ урайне шăлсан та, шăлмасан та пултаратăн. Манăн вара шăлмасан юрамасть. Эпĕ — октябрёнок.

В. Голявкин.



## ЭПИР СОВЕТ АЧИСЕМ.

Эпир Совет ҫӗршывӗн
телейлӗ ачисем.
Ӳсетпӗр ирӗк, сыввӑн
пуласлӑх хуҫисем.

Мухтавлӑ пирӗн халӑх
ӗҫре, кӗрешӳре.
Хӑй пек ӗҫчен, вӑй-халлӑ
вӑл ӳстерет пире.

Иван Ивник.

Предложенисем йӗркеле.

| | | |
|---|---|---|
| Нина | карап | савалать |
| Шура | кӗнеке | ӳкерет |
| Раман | хӑма | вулать |



## ПĔРРЕМĔШ ПАНУЛМИ.

Алёна пӳрт умне икĕ улмуççи лартрĕ. Пĕрине — амăшĕ, теприне — асламăшĕ ячĕпе.

Пĕр çул шăварчĕ улмуççисене хĕрача, икĕ çул... Виççĕмĕш çулхине амăшĕн улмуççийĕ çинче пĕртен-пĕр чечек çурăлчĕ. Унтан пĕртен-пĕр панулми тĕвĕленчĕ.

Кĕçех панулми пиçсе çитрĕ. Пĕррехинче Алёна сада тухрĕ. Вăл амăшĕн улмуççийĕ çинчи панулмие татса кĕчĕ. Ăна вăл, çурмаран касса, икĕ пĕчĕк турилкке çине хучĕ.

— Анне, асанне,— терĕ вăл,— панулми çийĕр, вăл сирĕн улмуççи çинче çитĕннĕ. Панулмийĕ тутлă пултăр.

Савăннă амăшĕпе асламăшĕ Алёна çине ăшшăн пăхрĕç.

В. Сухомлинский.



Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсене туп:

| | | |
|---|---|---|
| ăшă | шăрăх | пысăк |
| сулхăн | сарлака | хăвăртах |
| анлă | ерипен | капмар |
| хуллен | сивĕ | часах |

## ПĂРЧĂКАН.

— Пăрчăкан, пăрчăкан,
ма çунатна пăчăртан?
Тăрăс-тăрăс сиккелен,
хӳрӳне пĕрмай силлен,
мĕн пулнă вара паян?

— Эппинех сана калам:
лупас хыçĕнче — йăвам,
йăвара — тăват пепкем,
тăваттăш те тĕкленмен.



Эс илесрен чунăм çук,
эс тивместĕн пуль, Ваçук?

— Эх, пăрчăкан, пăрчăкан,
эс ахалех пăчăхан!
Кайăк чĕппине Ваçук
нихăçан та тивес çук.

Стихван Шавли.

Кирлĕ сăмахсем хушса çыр.

| | |
|---|---|
| 1) ... шăнкăрч йăви тăвать. | тăри |
| 2) Тӳпере ... юрă шăрататать. | ача |
| 3) ... чăхсене апат парать. | тăмана |
| 4) ... шăши тытать. | хĕрача |

Сăмахсене сыпăкласа вулăр.

Акăш, чăх, автан, хур, пăрчăкан, кăвакал, çерçи, шăнкăрч, ӳхĕ, тăмана.



## ПĔРЧĔ.

Атте сĕтел умĕнчи пукан çинче ларать. Эпир — сĕтел хушшинче. Апатланатпăр. Пурсăмăр та тирпейлĕ пулма тăрăшатпăр. Шăллăм Ванюк çеç тăп лара пĕлмест. Вăл куркинчи сĕтне тăкнă, çăкăрне тĕпретнĕ.

Атте ун çине пăхса илчĕ те:

— Эсĕ, Ванюк, хăçан тирпейлĕрех пулатăн? — тесе ыйтрĕ.— Çăкăра ун пек ан тĕпрет. Çăкăр вăл пĕрчĕрен пулать. Пĕр пĕрче хĕрхенме пĕлмен çын çĕр пĕрче хĕрхенми пулать. Ун пек юрамасть, ачам.

Ванюк вăтаннипе хĕрелсе кайрĕ. Вăл васкасах сĕтел çинчи тĕпренчĕксене пĕр çĕрелле пуçтарчĕ.

Илпек Микулайĕ.



Кирлӗ саспаллисем хушса ҫыр.

1) Ачасем ҫ.рлана кайнӑ.
2) Юманӑн вулли ҫ.рӗп.
3) Кӑҫал .раш ӑнса пулчӗ.

Сыпӑксем хушса, сӑмахсем ту.

Ҫӑ- , пӗр- , шӑл- , кур- , пу- , сӗ- .

## ПЫСӐК КУРКА.

Ҫак пӗчӗк шкулта икӗ класс ҫеҫ.

Пысӑк переменӑра ачасене сӗт ӗҫтереҫҫӗ. Сӗтне ачасем валли Марье инке илсе килет. Вӑл ывӑс ҫине ҫирӗм пилӗк курка лартса тухать. Кашни класӗнчех ҫирӗм пилӗк ачаҫке!

Столовӑйра ҫирӗм тӑватӑ курка пӗр пеккисем, пӗри вара пысӑкрах.



Малтан столовӑя яланах пӗрремӗш класс кӗрет. Ачасем ывӑс тавра хӗвӗшеҫҫӗ. Пысӑк курка енне нумай алӑ кармашать. Анчах ӑна пӗри ҫеҫ илме пултарать-ҫке. Телейли ҫине нумайӑшӗ ӑмсанса пӑхать.

— Мӗнле япӑх ачасем,— кулянать кун пек чух Марье инке.

Кӗҫех иккӗмӗш класс ҫитет. Ачасем ывӑс ҫинчи пӗчӗк куркасене васкамасӑр илеҫҫӗ. Пысӑк курка тӑрса юлать. Кая юлнӑ ача вара пысӑк куркана вӑтанчӑклӑн илет.

— Мӗнле ырӑ ачасем...— савӑнса мухтать вӗсене Марье инке.

В. Сухомлинский.

Кирлӗ сӑмахсем хушса ҫырса ил.

| | |
|---|---|
| Аннапа ... кӑмпана кайрӗҫ.<br>Вӗсем хыҫҫӑн ... та чупрӗ. | Марине<br>Улай |



# ТУЛ ÇУТĂЛАТЬ.

Çăлтăрсем сӳнеççĕ
ерипен, илемлĕн.
Уйăх шурса çитрĕ
çӳллĕ тӳпере.

Халĕ çĕкленес пек
вашават хĕвелĕ
тухăça илемлĕн
çулăм ӳкерет.

Улăхра, шăрçа пек,
кĕмĕлĕн-мерченĕн
чăмăртанчĕ сывлăм —
çакăттăм мăя.

Ереветлĕ шăпчăк
уншăн хĕпĕртенĕ,
эх, юрри-çке уççăн
чӳхенсе каять...

Иван Ивник.

Пăнчăсем вырăнне кирлĕ саспаллисем çыр. Тупсăмне туп.

? Утса-чупса пынă чух
кĕм.л ç.рĕ тухрĕ .крĕ. (Сывлăм.)



## ТАЛĂК.

Эпир пурăнакан Çĕр чăмăр. Ун тавралла — тĕнче уçлăхĕ.

Çĕр хăйĕн тĕнĕлĕ тавра тата Хĕвел тавра çаврăнать.

Çĕр хăйĕн тĕнĕлĕ тавра пĕр талăкра çаврăнса çитет. Çак вăхăтра çĕрпе кун ылмашать. Тĕттĕмленет, каç пулать, тул çутăлать, кун пуçланать.

## ВĂХĂТ.

Вăхăта сехетпе виçеççĕ. Сехет çинчи çаврашкана вуникĕ пая пайланă. Кашни пайĕ пĕр сехете пĕлтерет.

Сехетĕн икĕ йĕп. Пĕр йĕппи вăрăм, тепри — кĕске. Кĕске йĕппи сехетсене кăтартать. Вăл майĕпен куçать, талăкра икĕ хут çеç çаврăнать. Вăрăм йĕппи кашни сехетре пĕр çаврăм тăвать.



## КАÇ ПУЛАТЬ.

Хĕвел каçа сулăнать,
сăрт хыçнелле пытанать,
сулхăнланать сĕм вăрман,
уçă сывлăш палăрать.

Каçхи хĕвел ылтăн пек
йывăç витĕр курăнать,
сарă вĕçен кайăк пек
унăн çути вăй вылять.

Н. Шупуççынни.

Пăнчăсем вырăнне у е ÿ саспалли çыр.

1) .хĕ вăрманта пурăнать.
2) Раман .хă турĕ.
3) Ял çумĕнчи к.лĕ тарăн.
4) Ачасем вăйă-к.лă юратаççĕ.



# КУШАК АҪИПЕ ҪЕРҪИ.

(Чӑваш халӑх юмахӗ.)

Пӗррехинче кушак аҫи хӗвел питтинче ӑшӑнса выртнӑ. Хайхискер, ӑшӑ та тутӑ пурнӑҫпа киленсе, куҫӗсене хупса мӑрлатнӑ. Сасартӑк вӑл юнашарах такам сассине илтет: «Чӗвик! Чӗвик!»

Куҫне уҫать те курать: валашка хӗрринче ҫерҫи ларать иккен. Темӗн сӑхать вӑл.

Кушак аҫи шартах сикнӗ. Вӑл шӑртне вирелле тӑратнӑ.

Ҫерҫи, валашка тӑрӑх сиккелесе, ҫывӑхах пырать. Кушак аҫи чалт! ҫеҫ сикет те ҫерҫие ярса тытать.

Анчах ҫерҫийӗ ватӑскер пулнӑ. Ватӑ ҫерҫие хывӑхпа улталаймӑн!

— Чим! Чим! — тет вӑл.— Эсӗ мана ҫиес-се ҫийӗн те, анчах аса ил-ха. Паян, ҫывӑрса



тӑрсан, пит ҫурӑн-и? Эсӗ куҫусене те тасатман-ҫке. Аслӑ та ырӑ ҫынсем ирхине, сывӑрса тӑрсан, пит ҫӑваҫҫӗ, вара тин ӗҫе пикенеҫҫӗ.

— Ҫӑнах та, пит ҫӑвайманӑм! — аса илнӗ хайхи кушак аҫи.

Вӑл чӗрнисене пытарать те ҫерҫие вӗҫертсе ярать. Унтан ҫӑвӑнма пикенет. Урине ҫӗлхипе йӗпете-йӗпете, питне-куҫне сӑтӑркалать. Ҫерҫи пӑхрӗ-пӑхрӗ те пӑрр! турӗ, тет.

Ҫав вӑхӑтранпа кушак аҫи апат умӗн мар, апат хыҫҫӑн питне ҫӑвать, тет. Ӑна кура ытти кушаксем те апатлансан тин ҫӑвӑнаҫҫӗ.

Предложенисем йӗркелесе ҫыр.

1) кушак, тытма, шӑши, юрататъ.
2) ҫиет, вӑл, те, сӗт.
3) ҫӑвать, хыҫҫӑн, ҫинӗ, кушак, питне.



# ХРЕСЧЕНПЕ УПА.

(Белорус халӑх юмахӗ.)

Пӗр хресчен вӑрмана вутта каять. Ӗҫлесе ывӑнсан, тунката ҫине канма ларать. Кӗтмен ҫӗртен ун патне упа тухать.

— Эй, этем,— мӗкӗрсе ярать упа,— атя иксӗмӗр тытӑҫса пӑхар.

Пӑхать хресчен упа ҫине. Ытла та пысӑк-скер вӑл — ӑҫтан ҫыхланӑн унпа.

— Тӑхта, малтан санӑн вӑйна тӗрӗслесе пӑхар,— тет ӑна хресчен.

Вӑл пуртӑ илет те тункатана варринчен ҫурать. Унта савӑл ҫапса лартать:

— Ҫак тункатана тяппупа туртса ҫур. Вара эсӗ чӑнах вӑйли курӑнӗ.

Упи нимӗн шутламасӑрах тяппине хушӑка чиксе ярать. Хресчен савӑла ҫапать те кӑла-



рать. Тунката çавăнтах упа тяппине хĕстерсе хурать. Мĕкĕрсех ярать упа.

— Ну, мĕнле, кĕрешес шухăш пур-и? — кулать хресчен.

— Çук,— тет упа,— çыхланмастăп.

— Çапла çав. Вăйпа çеç мар, ăспа та çĕнтерме пулать. Çакна ялан асра тыт,— тет хресчен.

## Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене туп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| пысăк | тĕттĕм | кахал | хăюллă |
| хăравçă | ĕçчен | çутă | пĕчĕк |

## Предложенисем йĕркелесе çыр.

| | |
|---|---|
| Хураçка | чĕпсене сыхлать. |
| Марине | шăши тытать. |
| кушак | ăслă йытă. |



# ИКĔ ШАПА.

(Юмах.)

Икĕ шапа ăнсăртран хăйма чӳлмекне кĕрсе ӳкнĕ. Вĕсенчен пĕри çемçешкерех те шиклĕрех пулнă. Вăл кăштах ишкеленĕ те:

— Манран пурпĕрех ишсе тухасси пулмасть,— тенĕ.— Мĕскер пустуй тапаçланас! Путас та вилес!

Путнă вара вăл.

— Çук,— тенĕ тепри,— путма эпĕ кирек хăçан та ĕлкĕрĕп. Ишем вăй пĕтсе çитиччен...

Нумай иртнĕ-и вăхăт, сахал-и. Мĕн ку? Шапа хăй айĕнче хăйма мар, темĕнле хытă япала пуррине туйнă. Пăхнă та хăй çу чăмăркки çинче ларнине курах кайнă.

Ише-ише шапа хăех çу ӳкернĕ иккен! Çакă çăлса хăварнă та ăна.



Предложенисем йĕркелесе ҫыр.

1) Павлуш, вулать, юмах.
2) Шура, кăмпана, кайнă, Машăпа.
3) парать, Нина, апат, чăхсене.

## УЛИНЕ ТĔЛĔНЕТ.

Пĕррехинче пиллĕкри **Улине** ашшĕпе пĕрле вырăс ялне кайнă. **Урамра** пĕчĕк ачасем выляна. Вĕсем хĕрсе **кайсах** тем ҫинчен калаҫнă.

Улине шалт тĕлĕннĕ.

— Атте, пăх-ха, хăйсем пĕчĕк ҫеҫ, вырăсла епле лайăх пĕлеҫҫĕ. Манăн та ҫапла вĕренесчĕ.

Инҫех те мар колхозăн ĕне ферми пулнă.

Улине ĕнесем макăрнине илтнĕ те:

— Ĕнисем чăвашлах макăраҫҫĕ тата,— тенĕ.

М. Сакмаров.



## УТĂРА.

Колхозниксем утă çулма тухрĕç. Пĕчĕк Илемпи те вĕсемпех. Аслисем çулаççĕ. Илемпи паккус салатать.

Кăнтăрла тĕлне самаях ывăнчĕ Илемпи. Хĕвелĕ тата! Мĕншĕн çав териех çунтарать-ши?

— Хĕвел ури вăрăмланнă,— сăмах хушрĕ кукашшĕ.— Илемпи çине пусма пуçларĕ, авă.

— Пусрĕ пуль çав,— терĕ кукамăшĕ те.

— Мĕнле хĕвел ури? — тĕлĕнет хĕрача.— Ăçтарах вăл? Тӳпе сенкер те тăрă. Нимĕн ури те курăнмасть.

— Ларса кан, мăнукăм,— терĕ кукашшĕ.— Ăшăрхарăн, ывăнтăн пулĕ.

Ю. Смирнова.



## ТЕЛЕЙЛĔ АЧАСЕМ.

Пире çут ир лăпкать ачашшăн,
хĕвел пире савса кулать.
Çул уçă халь кашни ачашăн —
хавасланса çӳре шкула.

Шур çеçкере колхозăн сачĕ.
Ытарма çук ун илемне.
Пире телейлĕ пурнăç пачĕ
Тăван çĕршыв — тăван анне.

Эпир хастаррăн вĕренетпĕр
мĕнпур ĕçре ăста пулма.
Ӳсетпĕр, паттăр çитĕнетпĕр
телейлĕ пурăнăç тума.

А. Ĕçхĕл.

Учебное издание

**Тамара Васильевна Артемьева**
**Михаил Константинович Волков**
**Леонид Павлович Сергеев**

**ЧУВАШСКИЙ БУКВАРЬ**

Издание пятое, исправленное

Под общей редакцией кандидата
педагогических наук **М. К. Волкова**

Зав. редакцией **Г. Г. Иванов**
Редактор **А. А. Алексеев**
Художник **В. А. Смирнов**
Художественный редактор **М. Д. Давлятшин**
Технический редактор **В. П. Окина**
Корректор **Л. К. Егорова**

ИБ № 2114

Сдано в набор 15.01.88. Подписано к печати 15.09.88. Формат $70 \times 90^{1}/_{16}$. Бумага офсетная № 1. Гарнитура букварная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 10,53+0,29 форз. Усл. кр.-отт. 43,87. Учетно-изд. л. 10,69+0,46 форз. Тираж 15000 экз. Зак. № 6. Изд. № 91. Цена 50 коп.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской АССР по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.


Аа Ӑӑ Бб Вв
Ёё Жж Зз
Мм Нн Оо Пп
Уу Ӳӳ Фф
Щщ ъ Ыы ь


Гг Дд Ее Ёё
Ии Йй Кк Лл
Рр Сс Ҫҫ Тт
Хх Цц Чч Шш
Ээ Юю Яя

50 пус

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ